26-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
2
ШАМАТКУН
196(6433) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

1943 çулхи сентябрӗн 30-мӗшӗнче Хӗвеланăç фронтӗнчи çарсем СОЖ шывӗ урлӑ каçнӑ та тӑшманӑн Могилев енчи тӗреклетнӗ паха пункчӗпе чугун çул узелне—КРИЧЕВ хулине çапӑçса тытса илнӗ.

КРИЧЕВ хулине ирӗке кӑларасшӑн çапӑçнӑ чухне МАЛЬЦЕВ полковникӑн 212-мӗш стрелковӑй дивизийӗ, СУПРУНОВ полковникӑн 385-мӗш стрелковӑй дивизийӗ тата САВИН полковникӑн 572-мӗш тупӑллӑ артиллери полкӗ уйрӑмах чапа тухнӑ.

Тунӑ çитӗнӳсене яланлӑха палӑртса хӑварас тесе, 212-мӗш стрелковӑй дивизие, 385-мӗш стрелковӑй дивизие тата 572-мӗш тупӑллӑ артиллери полкне „Кричевски" тесе ят парас, вара малашне вӗсене çапла чӗнмелле тӑвас:

212-мӗш Кричевски стрелковӑй дивизи,
385-мӗш Кричевски стрелковӑй дивизи,
572-мӗш Кричевски тупӑллӑ артиллери полкӗ.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1943 çулхи сентябрӗн 30-мӗшӗ.

Государство умӗнчи обязательствӑсене хӑвӑрт пурнӑçа кӗртер

Тӑван çӗршывӑн ирӗклӗхӗпе чыслӑхӗшӗн çапӑçса чаплӑ çӗнтерӳсем туса пыракан хамӑрӑн геройла Хӗрлӗ Çара тыл куллен вӑйлӑн пулӑшса тӑрать. Заводсемпе фабрикӑсенчи рабочисем, инженерсемпе техниксем Хӗрлӗ Çарӑн хӑватне малалла вӑйлӑн ӳстерсе пырассишӗн ырми-канми ӗçлеççӗ. Пирӗн промышленность Хӗрлӗ Çар воинӗсене тупӑ-пӑшал, танксемпе самолетсем, боеприпассем ытлӑн-çитлӗн парса тӑрать.

Социализмлӑ ялхуçалӑх умне те фронтпа тӑван çӗршыв чыслӑ задача лартнӑ. Нимӗç оккупанчӗсене хирӗç паттӑррӑн çапӑçакан Хӗрлӗ Çар воинне тата заводсемпе фабрикӑсенче паттӑрла ӗçлекен рабочисене апат-çимӗçпе чӗрпавар хатӗрлесе парассипе ялхуçалӑхӗнчи ӗççыннисен чыслӑ тивӗçлӗхӗ пулать.

Вӑрнар районӗнчи колхозниксем пуçарнипе пирӗн Чӑваш республикинчи районсенче тырпулсене ӑнăçлӑн пухса кӗртессишӗн тата государствӑна тыра памалли плана срокчен пурнӑçлассишӗн, çапла вара уборка ӗçӗсене вӑхӑтра ӑнăçлӑн вӗçлени тата государство умӗнчи обязательствӑсене срокчен парса татни çинчен Сталин юлташа пуринчен малтан рапорт пама право илессишӗн социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарӑлчӗ.

Малта пыракан Етӗрне, Вӑрнар районӗсем государствӑна тыра памалли хӑйсен обязательствисене пурнӑçларӗç. Халӗ ку районсенчи колхозсем натуроплата шучӗпе государствӑна тыра авансла параççӗ. Государствӑна тыра парас ӗç çавӑн пекех Сӗнтӗрвӑрри, Советски, Шупашкар, Канаш районӗсенчи колхозсенче пысӑк тимлӗхпе пулса пырать. Ку районсем тыра памалли çулталӑкри плана 73—78 процент пурнӑçланӑ.

Çапах та пирӗн республикӑра çак ответлӑ ӗç çителӗклӗ хӑвӑртлӑхсемпе пулса пырать теме çук-ха. Уйрӑмах Пӑрачкав, Шӑмӑршӑ, Чкаловски, Кувакино, Елчӗк тата Первомайски районсем япӑх ӗçлеççӗ. сак районсем ӑмӑртура республикӑна каялла туртаççӗ. Пӑрачкав районӗ государствӑна тыра памалли 1943 çулти обязательствӑсене мӗнпурӗ те 17 процент çеç тултарнӑ. Кунти партипе совет организацисен руководителӗсем, колхозсемпе ялсовет исполкомӗсен председателӗсем СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ «1943 çулта тырпулсене пухса кӗртесси тата ялхуçалӑх продукчӗсем хатӗрлесси çинчен» йышӑннӑ постановление пурнӑçа кӗртсе пырассишӗн япӑх кӗрешеççӗ.

Первомайски районра социализмлӑ ӑмӑртӑва тивӗçлипе ертсе пыни курӑнмасть. Колхозсем вӑрнарсен чӗнӗвне сӳтсе-явса обязательствӑсем илнӗ, анчах илнӗ обязательствӑсене пурнӑçа кӗртсе пымаççӗ. «Комсомолец» колхоз государствӑна тыра сентябрь уйӑхӗнче парса татма палӑртнӑ, анчах çакӑншӑн кунта кирлӗ пек тӑрăшмаççӗ.

Çак кунсенче ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн черетлӗ пленумӗ пулса иртрӗ. Пленум республикӑри колхозсенче ялхуçалӑх продукчӗсене хатӗрлес ӗç мӗнле пулса пынине пăхса тухрӗ, çак ответлӑ ӗçре пысӑк çитменлӗхсем пуррине палӑртрӗ, вӗсене пӗтермелли майсене кӑтартса, çирӗп решени йышӑнчӗ.

Пленум Пӑрачкав, Шӑмӑршӑ, Чкаловски, Кувакино, Елчӗк тата Первомайски районсем государствӑна ялхуçалӑх продукчӗсем хатӗрлесе парас ӗçре питех те юлса пынине палӑртрӗ. Ку районсенчи ВКП(б) райкомӗсен тата райсовет исполкомӗсен руководителӗсене çитес вунӑ кун хушшинче районра государствӑна тыра парас ӗçе тӗпренех вӑйлатма хушрӗ.

Нумай районсемпе колхозсен руководителӗсем государствӑна çӗрулми парас ӗçе кая хӑварса пынине пленум сивлерӗ. Çӗрулми кӑларас тата пахча-çимӗçе тирпейлӗн пухса кӗртес ӗçе тӗпренех вӑйлатас пулать, çак кунсенчех пур колхозсен те государствӑна çӗрулми парса татма тӑрăшмалла.

Чылай районсенчи колхозсем йӗтӗн, кантӑр татса пухас тата ăна çапса шыва хутас ӗçе кая хӑварчӗç. Сентябрӗн 30-мӗшӗ тӗлне республика йӗтӗн 88,5 процент, кантӑр 59,3 процент çеç татса пухнӑ. Вӗсене çапса шыва хутса кӑларасси тата япӑхрах пулса пырать. Çакӑ вӑл государствӑна сӳс-кантӑр хатӗрлесе парас ӗç кая юласси патне илсе пырать. Çак хӑрушлӑха сирсе ямалла.

Ялхуçалӑхӗн ытти продукчӗсене хатӗрлес ӗçсем те республикӑра кая юлчӗç. Сентябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне çулталӑкри обязательствӑсене ашкакай енӗпе—67 процент, сӗт-çу енӗпе—67,3 процент, çăм енӗпе — 78,6 процент çеç пурнӑçланӑ. Ялхуçалăх продукчӗсем хатӗрлесе парас ӗçре единоличниксем уйрӑмах кая юлса пыраççӗ.

Пленум ВКП(б) райкомӗсене, райисполкомсене, МТС-семпе совхозсен директорӗсене государствӑна тыра парас ӗçе вӑйлатас тӗлӗшпе витӗмлӗ мерӑсем йышӑнма хушрӗ. Государствӑна тыра памалли плана пур колхозсенче те Совнаркомпа ВКП(б) Обкомӗ кӑтартса панӑ срокра пурнӑçа кӗртме кирлине асăрхаттарчӗ. Пилӗк кун хушшинче кашни колхозпа совхозрах тыра парас ӗç мӗнле пулса пынине тӗрӗслесе тухса, çак ӗçри чӑрмавсене сирмелле. Республикӑри пур районсенче те октябрӗн 20-мӗшӗччен авӑн çапса пӗтермелле. Пур молотилкӑсене те ӗçе ямалла, авӑна тӑпачӑпа та çапас пулать. Колхозсенче авӑн çапакан бригадӑсем туса, молотилкӑсемпе кунӗн-çӗрӗн ӗçлемелле.

Пленум МТС директорӗсене МТС ӗçлекен кашни колхозрах натуроплата тыррине мӗнле парса пынине тӗрӗслесе тухма хушрӗ. МТС туса панӑ ӗçшӗн тухакан тырра колхозсен халех парса татмалла тесе хушса хӑварчӗ.

СССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Центральный Комитечӗ кӑтартса панӑ тӑрӑх, пур колхозсемпе совхозсенче те авӑн çапнин пахалӑхне тата государствӑна тыра парас ӗç мӗнле пынине пăхса тухас майпа государственнӑй тӗрӗслӳ туса ирттермелле.

Пленум ЧАССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ республикӑра 1943 çулхи ялхуçалӑх ӗçӗсене вӗçлемелли фронтовой уйăхлăх организацилеме ырларӗ. 1943-мӗш çулти ялхуçалӑх ӗçӗсене пысӑк пахалăхпа тата хӑвӑрт вӗçлессишӗн, фронтра историллӗ çӗнтерӳсем туса пыракан хамӑрӑн Хӗрлӗ Çара ялхуçалӑх продукчӗсем ытлӑн-çитлӗн хатӗрлесе парассишӗн тата хӗрӳллӗн кӗрешер, социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарар!

Совет Информаци Бюровӗнчен

СЕНТЯБРӖН 30-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Сентябрӗн 30-мӗшӗнче МОГИЛЕВ енче пирӗн çарсем, ӑнăçлӑн наступлени туса пырса, 12 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçнӑ. СОЖ шывӗ урлӑ каçса, КРИЧЕВ хулипе чугун çул узелне тытса илнӗ, çавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 170 пункта йышӑнса илнӗ. Вӑл шутра ЛУКИ, МИКУЛЕНО, ЛЕБЕДЕВО, НИКОДИМОВО, КЛЕДНЕВИЧИ, НИКОЛЬСКОЕ, ЯРЦЕВКА, ЕСКОВКА, КАРТЫЖИ, АСМОЛОВИЧИ, ШИРКИ, ТУРОВКА, ЛОБКОВИЧИ, ДУБРОВКА, ИВАНОВКА, ВОРОНОВО, ЛОБЖА, КЛИНЫ, АНТОНОВКА, ГОРНО КОЗЕЛЬСКАЯ БУДА, ЗАГОРЕЛЬЕ ятлӑ пысӑк пунктсене тата ТЕМНЫЙ ЛЕС, ХОДОСЫ ятлӑ чугун çул станцийӗсене тытса илнӗ.

ГОМЕЛЬ енче пирӗн çарсем çаплах наступлени туса пынӑ, уйрӑм участоксенче 10 километртан пуçласа 12 километр таран малалла куçса, Гомель облаçӗнчи СВЕТИЛОВИЧИ ятлӑ район центрне тытса илнӗ, çавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 60 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Вӑл шутра КУРБАКИ, ДЕРНОВАЯ, ГОРЫ, СТАЙКИ, КИБИРЩИНА, МОРОЗОВКА, ЛОТАКИ, ИВАНОВКА, ПАЛУЖСКАЯ РУДНЯ, ЛЕТЯХИ, ШЕЛУХОВКА, ГЛУХОВКА, НЕСТЕРОВКА, ГАРУСТЫ, ГУТА ятлӑ пысӑк пунктсене тытса илнӗ.

ВИТЕБСК енче пирӗн çарсем, тӑшман хирӗç тӑнине çӗнтерсе пырса, çаплах наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Вӑл шутра ТРОШКИ, ШЕРЬКОВО, БАЕВО, СЫСОЕВО ятлӑ пысӑк пунктсене тытса илнӗ.

Сентябрӗн 29-мӗшӗнче пирӗн çарсем мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 95 танкне персе çӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 36 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Могилев енче пирӗн çарсем ӑнăçлӑн наступлени туса пынӑ. Пӗр соединени чаçӗсем Сож шывӗ урлӑ каçнӑ та хаяррӑн çапӑçнӑ хыççӑн чугун çулсен тата ахаль çулсен паха узелне—Кричев хулине тытса илнӗ. Кричев хулишӗн çапӑçнӑ чухне тӑшманӑн 1.200 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Чугун çул составӗсем, çар склачӗсем тата нумай хӗçпӑшал тытса илнӗ. Кричев хулинчен çурçӗртерехре пирӗн çарсем нимӗçсене Лобковичи ятлӑ пунктран тата ытти вӑйлӑ çирӗплетнӗ пунктсенчен çапса кӑларнӑ. Кун каçиччен нимӗçсен фашистла захватчикӗсенчен халӑх пурӑнакан 170 пункта ытла ирӗке кӑларнӑ. Нимӗçсенчен 28 тупӑ, боеприпассен 2 пысӑк складне тата пӗр продовольстви складне тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

Пирӗн старши лейтенант Максимов ертсе пыракан штурмовик-самолетсен ушкӑнӗ боевой задани пурнӑçласа каялла таврӑннӑ чухне тӑшманӑн «Ю—52» йышши 6 транспорт самолетне тӗл пулнӑ. Пирӗн летчиксем тӑшмана атакӑланӑ та нимӗçсен 5 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Гомель енче пирӗн çарсем Беседь шывӗ урлӑ каçнӑ та малалла куçса пырса, Гомель облаçӗнчи Светиловичи ятлӑ район центрне тытса илнӗ. çавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти пунктсене те йышӑнса илнӗ. Кун каçиччен нимӗçсен салтакӗсемпе офицерӗсене 1.000 çын ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Хай тӗллӗн çӳрекен 3 тупӑ, 14 хир туппи, 60 автомашина тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Советсен çăмӑллӑн куçса çӳрекен подразделенийӗсем, Беседь тата Сож шывӗсем хушшинчи района тӑшмантан тасатса пынӑ май, чылай гитлеровеца тыткӑна илнӗ.

Çакӑн пек хыпарсем илнӗ: сентябрӗн 27-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн авиаци Гомель чугун çул узелне пырса тапăннӑ чухне боеприпассен тата горючин темиçе складне сирпӗнтерсе янӑ, чугун çул çинчи 4 эшелона пӗтерсе тӑкнӑ тата тӑшманӑн 20 автомашинине çити çунтарса янӑ.

* * *

Витебск енче пирӗн çарсем çаплах наступлени туса пынӑ, халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла йышӑнса илнӗ. Пӗр соединени чаçӗсем тӑшманӑн икӗ контратакине сирсе янӑ, унтан тӑшмантан иртсе кайнӑ та, ӑнăçлӑ маневр туса, нимӗçсен икӗ батальон пехотине тата икӗ артиллери дивизионне пӗтерсе тӑкнӑ. Йӗркерен кӑларнӑ тӑшмана хӑваласа пырса, совет боецӗсем трофейӑсем тытса илнӗ, вӗсен шутӗнче 3 паровоз, 22 вагон тата пӗтӗмӗшпех юсавлӑ 8 танк пур. Тепӗр районра пӗр чаçӑн подразделенийӗсем нимӗçсен 268-мӗш пехотнӑй полкӗнчи пӗррӗмӗш батальонӑн штабне аркатса тӑкнӑ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Хӗрлӗ ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ Балтика тинӗсӗнче нимӗçсен 5 пин тонна водоизмещениллӗ транспортне шыва путарнӑ.

* * *

Молдаван партизанӗсен отрячӗ, минӑсем лартса, тӑшманӑн икӗ чугун çул эшелонне сирпӗнтерсе янӑ, крушенире 2 паровоз тата 23 вагон çӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Партизансен разведчикӗсем çакна пӗлсе тавӑрӑннӑ: нимӗçсен çул юсакан команди вагонсен ванчӑкӗсем айӗнчен вилнӗ е йывӑр аманнӑ 120 салтакпа офицера туртса кӑларнӑ. Киев облаçӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ тӑшманӑн автоколоннине тапӑннӑ. Танксене пемелли пӑшалсемпе персе, партизансем 2 бронемашина тата 8 автомашина пӗтерсе тӑкнӑ. Темиçе вунӑ гитлеровеца вӗлернӗ. Партизансем 3 пулемет, 30 автомат тата патронсем нумай тытса илнӗ.

* * *

Славянск хулине оккупациленӗ хыççӑн нимӗçсен фашистла ирсӗрӗсем темиçе пин мирлӗ совет гражданне асаплантарса вӗлернӗ. 1941 çулхи декабрьте кӑна фашистла палачсем 420 семьене касса тухнӑ е персе вӗлернӗ. Уйрӑмӑнах вӗсем хӑйсем чакас умӗн иртӗнсе кайнӑ. Аяларах нимӗçсен фашистла ирсӗрӗсем Славянск хулине ишни çинчен çырнӑ акта пичетлетпӗр:

«Нимӗçсем хулари мӗнпур 25 заводпа фабрикӑна йӑлтах ишсе антарнӑ. Вӗсем хушшинче çаксене ишнӗ: «Коксохиммонтажа», «Красный химик» ятлӑ сода заводне, Новосодовӑй завода, селикат заводне, толь заводне, авторемонтнӑй завода, Артем ячӗпе тӑракан изоляторнӑй завода, Крупская ячӗпе тӑракан керамически завода, кислотоупорнӑй керамика заводне, «Красный металлист», «Красный литейщик» ятлӑ заводсене, чугун çул деповне тата Славянск станцийӗн мастерскойӗсене, макарон, карандаш, сӗтел-пукан фабрикисене, шкул оборудованийӗн фабрикине тата ыттисене те. Нимӗçсен ятарласа уйӑрнӑ командисем электроподстанцин, шыв башнин, çыхăну узелӗн, çӑкӑр завочӗн, арманӑн çурчӗсемпе оборудованине ишсе антарнӑ тата Торец шывӗ урлӑ хывнӑ икӗ кӗпере çунтарса е сирпӗнтерсе янӑ. «Факелщиксен» уйрӑм командисем туллии тата туллимар вӑтам шкулсен, хӑлхасӑр-чӗлхесӗрсен шкулӗн, педагогика училищин, хими тата чугун çул техникумӗсен çуртсемпе инвентарне çунтарса янӑ. Ленин ячӗпе тӑракан 900 вырӑнлӑ хула театрне, Краеведени музейне, хула библиотекине, пионер клубне, чугун çул больницине, ача çуратмалли çуртсене, хулари 6 поликлиникӑна, 2 аптекӑна, 2 медицина лабораторине тата хӑвӑрт пулӑшу паракан станцие ишсе антарнӑ е çунтарса янӑ.

Фашистла ирсӗрсем Славянск курорчӗн сыватмалли учрежденийӗсене пӗтерсе тӑкнӑ. Вӗсем травматологически тата бальнеофизиотерапевтически институтсене, грязелечебницӑна тата курортри 8 санаторие вӗсен пулӑшуллӑ темиçе вунӑ çурчӗпе пӗрлех ишсе антарнӑ. Курортӑн паркне тата авалхи хыр вӑрманне касса пӗтернӗ. Унсӑр пуçне гитлерла бандитсем хулара пурӑнмалли 1.082 çурта çунтарса янӑ».

Çак акта «Красный химик» ятлӑ сода завочӗн рабочийӗ Ф. Глушаков, хула поликлиникин врачӗ О. Золотухин, 3-мӗш шкул педагогӗ А. Людвиченко, протоиерей Константин Ружицкий, ачаçуратмалли çуртри врач А. Потренко, майор Н. Атаров тата ыттисем те алӑ пуснӑ.

Пирӗн авиаци Витебск, Орша, Могилев, Джанкой чугун çул узелӗсене тапăнни

Сентябрӗн 30-мӗшӗ ыран тенӗ чух çӗрле пирӗн авиаци Витебск, Орша, Могилев, Джанкой чугун çул узелӗсенче нимӗçсен пӗр çӗре пухӑнса тӑнӑ çар эшелонӗсем çине бомбӑсем пӑрахнӑ. Асăрхакансем бомбӑсем тӳрремӗнех чугун çул составӗсемпе çар склачӗсем çине ӳкнине курнӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула пушарсем тухнӑ, пушарсенче взрывсем пулнӑ.

Пирӗн самолетсем пурте хӑйсен аэродромӗсене таврӑннӑ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

В. М. Молотов юлташа Социализмлӑ Ӗç Геройӗн званине парасси çинчен

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисенче танксем туса кӑларас ӗçе вӑйлатас тӗлӗшпе уйрӑмах паха ӗççем тунӑшӑн Вячеслав Михайлович МОЛОТОВ юлташа ЛЕНИН орденӗ тата „СЕРП и МОЛОТ" ылттӑн медаль парса, СОЦИАЛИЗМЛА ӖÇ ГЕРОЙӖН званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ
М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ
А. ГОРКИН

Мускав, Кремль. 1943 çулхи сентябрӗн 30-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Л. П. Берия юлташа Социализмлӑ Ӗç Геройӗн званине парасси çинчен

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисенче хӗçпӑшалпа боеприпассем туса кӑларас ӗçе вӑйлатас тӗлӗшпе уйрӑмах паха ӗççем тунӑшӑн Лаврентий Павлович БЕРИЯ юлташа ЛЕНИН орденӗ тата „СЕРП и МОЛОТ" ылттӑн медаль парса, СОЦИАЛИЗМЛӐ ӖÇ ГЕРОЙӖН званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ
М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ
А. ГОРКИН

Мускав, Кремль 1943 çулхи сентябрӗн 30-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Г. М. Маленков юлташа Социализмлӑ Ӗç Геройӗн званине парасси çинчен

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисенче самолетсемпе моторсем туса кӑларас ӗçе вӑйлатас тӗлӗшпе уйрӑмах паха ӗççем тунӑшӑн Георгий Максимилианович МАЛЕНКОВ юлташа ЛЕНИН орденӗ тата „СЕРП и МОЛОТ" ылттӑн медаль парса, СОЦИАЛИЗМЛА ӖÇ ГЕРОЙӖН званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ
М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи сентябрӗн 30-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

А. И. Микоян юлташа Социализмлӑ Ӗç Геройӗн званине парасси çинчен

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисенче Хӗрлӗ Çар валли продовольстви, горючи тата тӗрлӗ япаласем тӑратас тӗлӗшпе уйрӑмах паха ӗççем тунӑшӑн Анастас Иванович МИКОЯН юлташа ЛЕНИН орденӗ тата „СЕРП и МОЛОТ" ылттӑн медаль парса СОЦИАЛИЗМЛӐ ӖÇ ГЕРОЙӖН званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ
М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ
А. ГОРКИН

Мускав, Кремль. 1943 çулхи сентябрӗн 30-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

И. Т. Тевосян тата П. И. Коробов юлташсене Социализмлӑ Ӗç Геройӗн званине парасси çинчен

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисенче мӗнпур йышши хӗçпӑшал, танксем, авиаци тата боеприпассем валли лайӑх тата питӗ лайӑх металл туса кӑларас ӗçе организацилес тӗлӗшпе уйрӑмах паха ӗççем тунӑшӑн, ЛЕНИН орденӗ тата „СЕРП и МОЛОТ" ылттӑн медаль парса, СОЦИАЛИЗМЛӐ ӖÇ ГЕРОЙӖН званине парас:

1. Иван Тевадросович ТЕВОСЯНА
2. Павел Иванович КОРОБОВА.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ
М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи сентябрӗн 30-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

В. В. Вахрушев юлташа Социализмлӑ Ӗç Геройӗн званине парасси çинчен

Вӑрçӑ вӑхӑтӗнчи йывӑр условисенче çӗркӑмрӑк нумайрах кӑларса оборона промышленноçне топливо çителӗклӗ парса тӑрас тӗлӗшпе уйрӑмах паха ӗççем тунӑшӑн Василий Васильевич ВАХРУШЕВ юлташа ЛЕНИН орденӗ тата „СЕРП и МОЛОТ" ылттӑн медаль парса, СОЦИАЛИЗМЛӐ ӖÇ ГЕРОЙӖН званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ
М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи сентябрӗн 30-мӗшӗ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Интендант службин генерал-полковникне А. В. Хрулева 1-мӗш степенлӗ Суворов орденӗпе наградӑласси çинчен

Çуллахи анлӑн сарӑлса кайнӑ кампанин йывӑр условийӗсенче действующи армие тӗрлӗ хатӗрсем пӗр чарӑнмасӑр парса тӑрас тӗлӗшпе Верховный Главнокомандовани панӑ заданисене кӑтартуллӑн пурнӑçа кӗртсе панӑшӑн интендант службин генерал-полковникне Андрей Васильевич ХРУЛЕВА 1-мӗш степенлӗ СУВОРОВ орденӗпе наградӑлас.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ
М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ
А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1943 çулхи сентябрӗн 30-мӗшӗ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелли фронтовой уйăхлăх

Фронтовой уйăхлăхра

ЭЛĔК, октябрĕн 1-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Фронтовой уйăхлăха хутшăннă хыççăн колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене часрах вĕçлеме тăрăшса ĕçле пуçларĕç. Енерхи кун тĕлне районри 10 колхоз аван çапса пĕтерчĕç. Вите Çуртĕнчи «Шуçăм» колхоз (председателĕ Капитанов) сентябрĕн 13-мĕшĕнче аван çапса пĕтерчĕ. Çавăн пекех государствăна тырă планран иртерсе парса татрĕ, сĕт-çу, ...какай тата çăм памалли обязательствăсене те тултарчĕ. Халĕ колхоз выльăх-чĕрлĕхе хĕле кĕртме тимлĕн хатĕрленет. Витесене пурне те юсаса çитерне, выльăх-чĕрлĕх валли татах силос хываççĕ.

Район сентябрĕн 29-мĕшĕ тĕлне пурĕ 16.197 гектар тырра çапса пуçтарнă, 656 гектар кантăр татнă. 237 гектар вăрлăхлăх клевера вырса итем çине кĕртнĕ. «16-мĕш партсъезд», «Большевик» колхозсем вăрлăхлăх клевера çапса пуçтарчĕç.

М. КРАСИЛЬНИКОВ,
ВКП(б) Элĕк райкомĕн секретарĕ.

Кунта васкамаççĕ

Буденный ячĕпе тăракан колхозăн кĕрхи çĕртме тума, çĕрулми кăларма, аван çапма, кĕлте кÿме тата государствăна тырă леçме туртăм вăйĕпе ĕç вăйĕ çителĕклĕ. Кунта пур ялхуçалăх ĕçне те вăхăтра туса пыма май пур. Анчах ку колхозра ĕç пачах урăхла пулса пырать.

Паянхи куна уйри кĕлтесене çурри таран ялан ...ыççĕ. Çерне ыхăн çеç турттарнă. Государствăна тырă памалли плана 60 процента яхăн кăна пурнăçланă. Кĕрхи çĕртме тума тата кантăр татма пуçламан та. Çĕрулми кăларма та тытăнман. Колхоз председателĕпе счетовод хĕрÿ ĕç вăхăтĕнче ĕçкĕре çÿреççĕ. Çавна пула хăшпĕр кун бригадăсене наряд памасăр иртерленĕ кунсем те пулнă. Тĕслĕхрен, сентябрĕн 19-мĕшĕнче пур бригада та правлени кăтартăвĕсĕр ĕçленĕ. Наряд та пулман. Кам мĕн тăвас тенĕ, çавна тунă. Буденный ячĕпе тăракан колхозра пахалăх комиссийĕ те çук. Аван çапнă çĕрте темĕн чухлĕ тăккаланчăк юлать. 3-мĕшпе 5-мĕш бригадăсенче уйран кÿрсе килекен кĕлтесене çерем çинех тăкаççĕ.

Çакăн пек йĕркесĕрлĕхсене пĕтерессишĕн кунта никам та тăрăшмасть. Ялти учительсем итем çине тухса та курмаççĕ. Ăнлантару ĕçне те кирлĕ пек туса пымаççĕ. Ку колхозра улшăну кирлех.

С. Шадин.

КАЛИНИНО.

Çĕнĕ вите тунă

ШАХАСАН. Енĕшри Максим Горький ячĕпе тăракан колхоз çак кунсенче 20 лаша вырнаçмалăх çĕнĕ вите туса пĕтерчĕ. Хĕле хатĕрленнĕ май, выльăх-чĕрлĕх усрамалли пур витесене те юсаса çитерчĕç.

Вĕсем ФЗО шкулĕнче вĕреннĕ

СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ государствăн ĕç резервĕсене тăвасси çинчен Указ кăларнăранпа виçĕ çул çитрĕ. Çак тапхăрта ФЗО шкулĕсем, ремесленнăй тата чугунçул училищисем пирĕн социализмлă промышленноçа квалификациллĕ рабочисем çĕршер пин çын хатĕрлесе пачĕç. Ĕç резервĕсем туни уйрăмах отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче хĕвелтухăçĕнчи районсене куçарнă предприятисем валли кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк пулăшу пачĕ.

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра, вăл Чăваш республикине куçса килнĕ чухне, квалификациллĕ рабочисем сахал пулнă. Çавăнпа та унта кадрсем хатĕрлес ыйту питех те çивĕччĕн тухса тăнă. Вăл ыйтăва завод çумĕнче ФЗО шкулĕ уçни татса пачĕ. ФЗО шкулĕнчен çулталăк çурă хушшинче квалификациллĕ рабочисем чылай вĕренсе тухрĕç. Вĕсенчен нумайăшĕсем халĕ заводра пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартса ĕçлеççĕ. Çапла ФЗО шкулĕ пĕтерни Краснов, токарь Редькин, револьверщик Сеньков тата ытти нумай юлташсем пысăк тухăçлăхпа ĕçленĕшĕн Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене илме тивĕçлĕ пулчĕç. ФЗО шкулне отлично паллăпа вĕренсе пĕтерни Мухаметов юлташ инструментальнăй цехра токарь пулса ĕçлесе нормăна 280 процент тултарать. Çав вăхăтрах вăл физкультурăпа çар ĕçне организацилесе пырать. Çавăн пекех ФЗО шкулĕ пĕтерне хыççăн 1942 çулта заводра ĕçлеме тытăннă токарь Владимир Петров та нормăна 300 процент тултарать. 1942 çулта ФЗО шкулĕнчен вĕренсе тухнă Алексеева юлташа халĕ пысăкрах ĕçе куçарнă. Унăн смени куллен икĕ норма тултарса пырать.

Канашри чугунçул училищинчен килнĕ юлташсем те стахановла ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем çамрăксене квалификаци илме вĕрентеççĕ. Çапла Б. Чапурин юлташ икĕ çамрăка электромонтер пулса ĕçлеме вĕрентнĕ. Кун пек примерсене çĕршерĕн илсе кăтартма пулать.

ФЗО шкулĕнче çамрăксене ĕçе хăнăхтарас тĕлĕшпе заводри ватă рабочисем çине тăрса ĕçлеççĕ. Старши мастер П. Плахотников, мастерсем Смелая, Фонберг, Кончар тата Слоневский юлташсем вăй-хăвата шеллемесĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем тăрăшса ĕçленине пула ĕнтĕ ФЗО шкулĕ хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать.

Анчах, калас пулать, ФЗО шкулĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Çамрăксене çирĕп дисциплинăна пăхăнма, хăйсем тĕллĕн пурăнма вĕрентесси çителĕксĕр пулса пырать. Шкул руководителĕсемпе преподавательсен малашнехи ĕçре асăннă ыйтусем çине ытларах çаврăнса пăхмалла.

Е. ОГОРОДНИКОВА.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕнче

Чкаловски районри комсомолецсен, шкул ачисемпе учительсен пуçарăвне сарасси çинчен

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ Чкаловски районри комсомолецсем, шкул ачисемпе учительсем кăçалхи кĕркунне колхозлă ялсемпе шкулсенче çимĕç йывăççисем лартса хăварас тĕлĕшпе республикăра социализмлă ăмăрту пуçарни çинчен сÿтсе-яврĕ.

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ Чкаловски районри комсомолецсем, шкул ачисемпе учительсем пуçарнине ырларĕ.

Комсомолăн колхозсенчи, шкулсенчи тата промышленность предприятийĕсемпе учрежденисенчи организацийĕсене кĕркунне йывăççем лартса чĕртес тĕлĕшпе Чкаловски районри комсомолецсен, шкул ачисемпе учительсен çыравĕнчи мероприятисене тĕп никĕсе хурса ĕçлеме сĕннĕ.

Чкаловецсен çыравне сÿтсе-явас ыйтупа мĕнпур колхозсенче, шкулсенче, промышленность предприятийĕсемпе учрежденисенче комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсене иртермелле, вĕсенче çимĕç йывăççисем лартса хăварас тĕлĕшпе конкретлăй обязательствăсем илмелле.

ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен çимĕç йывăççисем лартса хăварас ĕçе лайăхрах организацилессишĕн комсомол организацийĕсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла, унта колхозсенчи, шкулсенчи, промышленность предприятийĕсемпе учрежденисенчи мĕнпур комсомолецсемпе çамрăксене явăçтармалла.

Илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртнине тата ăмăртăвăн результачĕсене тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла, вĕсем çинчен комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсенче, комсомол активĕсенче сÿтсе-явмалла; хаçатсем çинче тата радио тăрăх çутатмалла; район центрĕнче, ялсовечĕсенче, колхозсенче тата шкулсенче çимĕç йывăççисем лартас ĕçе лайăхрах организацилессишĕн социализмлă ăмăрту мĕнле пынине кăтартакан хăмасем тумалла.

Колхозлă ялсемпе шкулсенче çимĕç йывăççисем лартса хăварар!

Чкаловски районри комсомолецсем, шкул ачисемпе учительсем Чăваш республикинчи комсомолецсем тата шкул ачисемпе учительсем патне янă çыру

Хаклă юлташсем!

Эпир, Чкаловски районри комсомолецсем, учительсемпе шкул ачисем мухтавлă Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туса пынипе тата вăл Орел, Белгород, Харьков, Сталино, Новороссийск, Смоленск тата ытти вуншар пысăк хуласемпе халăх пурăнакан пиншер пунктсене ирĕке кăларнипе хавхаланса, çĕнтерÿ тăвакан Хĕрлĕ Çар ячĕпе пĕчĕк те пулин, çапах пархатарлă ĕç тăвас шухăшпа кăмăлпа çунса, кăçалхи кĕркунне çимĕç йывăççисем лартса хăварас ĕçе пуçартăмăр. Çак ĕç—эпир отечественнăй вăрçă геройĕсем валли, хамăрăн аттемĕрсем, пиччемĕрсемпе сывăх тăванăмăрсем ячĕпе хатĕрленĕ парне пултăр.

Шартлама сивĕпе хăрса пĕтнĕ сатпахчисемпе çырла пахчисене тепĕр хут чĕртессишĕн тата çак ĕçе малалла аталантарассишĕн эпир республикări комсомолецсене, шкул ачисемпе учительсене социализмлă ăмăрту пуçарма чĕнетпĕр. Хамăр çак ĕçсене тума пулатпăр:

1. Кашни комсомолец, шкул ачи тата учитель кăçалхи сентябрĕн 25-мĕшĕпе ноябрĕн 1-мĕшĕ хушшинчи вăхăтра шкул участокĕсенче тата хăйсен килвырăнĕсенче 5 тĕпрен кая мар панулми йывăççи, 10—15 тĕпрен кая мар çырла йывăççисем (хăмла çырли, хурлăхан т. ыт. те) лартатпăр.

2. Колхозсенчи сивĕпе пĕтнĕ сатпахчисене пĕтĕмĕшпех чĕртетпĕр, çĕнĕ сатсем ÿстермелли плана пурнăçа кĕртмелле тăватпăр.

3. Панулми тата çырла йывăççисем лартас ĕçре фронтовиксен çемьисене пур енчен те пулăшатпăр.

4. Çимĕç йывăççисем лартас ĕçе тĕрĕс организацилес тата панулми йывăççисемпе çырла йывăççисене тĕрĕс пăхса çитĕнтерес тесе, хамăр хушăран сат-пахчи тата çырла пахчи хуçалăхĕ тăрас енĕпе ĕçлекен инструктор-организаторсем уйăратпăр, вĕсене райçĕрĕç пайĕ çумĕнче ятарласа организациленĕ кĕске срокла курссенче вĕрентсе хатĕрлетпĕр.

5. Сентябрĕн 30-мĕшĕ тĕлне кашни комсомолец, шкул ачипе учитель улмуççи лартма 5 шăтăк, çырла йывăççисем лартма 10—15 шăтăк чавса хатĕрлетпĕр, вĕсене апат пама çителĕклĕ таранах тислĕк хатĕрлесе хуратпăр.

6. Çимĕç паракан йывăççем лартса хăварни—ĕçĕн çурри çеç-ха. Эпир хамăр умма çамрăк йывăççене пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса çитĕнтерес задача лартрăмăр. Çакна май кашни комсомол организацийĕнче шкулта сат-пахчи çинчен вĕренмелли кружок организацилетпĕр.

Хамăр çине илнĕ обязательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе, эпир кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне районĕпе пурĕ 25.000 тĕп панулми йывăççи, 50.000 тĕп çырла йывăççисем лартса хăваратпăр, вĕсене хĕл касарма хатĕрлесе çитеретпĕр.

АЛЕКСЕЕВ—ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ, **НИКОЛАЕВ** — райсутĕç пайĕн заведующийĕ, **ЗАХАРОВ**—Анат-Тура вăтам шкулĕн директорĕ, **КРЫСИН**—Патăръелĕнчи плодопитомник заведующийĕ, **НИКИТИНА**—райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ, **ХАРИТОНОВ**—Долгоостроври тулли мар вăтам шкулта вĕренекен, т. ыт. те—пурĕ 35 çын алă пуснă.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй пĕлтернĕ тăрăх, Англин 8-мĕш армийĕ ăнăçлăн малалла тапăнса пырать. Италин хĕвелтухăç хĕрринче союзниксен çарĕсем Манфредони патне çитнĕ. Америкăн 5-мĕш армийĕ тăшмантан тытса илнĕ территорие аслăлатса пырать. Помпея тата Сан-Северино ятлă пунктсене йышăнса илнĕ. Каялла чакса пыракан тăшман хăй йышăннă вырăнсене ватса, çĕмĕрсе хăварать.

Рейтер агентствин Çурçĕр Африкări çарсен штабĕ çумĕнчи специальнăй корреспонденчĕ Неаполь тĕлĕнче пушарсен çутти курăнни çинчен пĕлтерет. Нимĕçсен ятарласа тунă командисем фабрикăсене, çуртйĕрсене, складсене тата ытти сооруженисене çĕмĕреççĕ.

КОРСИКА ÇИНЧИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Корсика утравĕн хĕвелтухăç хĕрринче Алери хули патĕнче тухса кайнă. Тăшман хăй çулĕ çинче мĕн пуррине пурне те çĕмĕрсе хăварать тата Франци çарĕсене малалла куçма чăрмантаракан мина хирĕсем питĕ нумай туса хăварать. Ударнăй батальон отрячĕсемпе партизансем тăшманăн хыçалта пыракан чаçĕсене уйăрса илсе, йывăр çухатусем тÿстерне. Тыткăна илнисем пур.

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Корсика утравĕ çинчи нимĕçсем Бастика—Берго—Фолелли районне çеç хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Хĕвелтухăç хĕрринче тăракан нимĕçсем союзниксен çарĕсем хĕснине пула Кортпа тинĕс хушшинчи районра хăварттăн каялла чакаççĕ. Пьеди-Кроче тăшманăн хирĕç тăмалли чи кирлĕ центр пулса тăрать, ăна ĕнер союзниксем тытса илнĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: сентябрĕн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен бомбардировочнăй авиаци самолечĕсем Рур облаçĕн вăтам пайĕнчи Бохума хаяррăн тапăннă. Унсăр пуçне Рурти ытти объектсем çине те бомбăсем пăрахнă.

Паян акăлчансен авиацийĕ Францире чылай объектсене тапăннă.

ВЕНĂРА ГИТЛЕРА ХИРĔÇЛЕ ВЫСТУПЛЕНИСЕМ ПУЛСА ИРТНĔ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцари хаçачĕсем çапла пĕлтереççĕ: Венăра çак кунсенче гитлерла штурмовиксемпе вырăнти халăх хушшинче пысăк тытăçусем пулса иртнĕ. Ку тытăçусем хупă тăракан çăкăр лавкисем умĕнче пулса иртнĕ. Лавкасем умĕнче пуçтарăнса тăнă хĕрарăмсем демонстраци пуçласа янă. Демонстрацири халăх гитлеровецсем продовольстви запасĕсене тытса илнине хирĕç протестленĕ. Демонстраци вăхăтĕнче юнлă тытăçусем пулса иртнĕ.

Германи çарĕн вăрçас хастарлăхĕ чакни

ЛОНДОН, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинран çак çулти август уйăхĕнче кайнă Швеци журналисчĕ Гуннара Пииль «Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçатра Германи салтакĕн шухăш-кăмăлĕ çинчен çырать. «Польшăпа Франци çĕрĕ тăрăх маршпа утса çÿрекен çынсем,—тесе çырать автор,—лайăх хатĕрленсе çитнĕ футболистсене аса илтеретчĕç. Халь çав салтаксен 60 проценчĕ Россия çĕрĕнче выртать, ыттисем инвалидсем пулса киле таврăннă. Берлин урамĕсенче кирек ăçта та урасăр, аласăр, суккăр çынсене курма пулать. Вĕсен фронтри вырăнĕсене çамрăк ачасемпе 50 çулхи арçынсем йышăннă. Халь тата çамрăксене те ватă çын сăнĕ çапнă. Вĕсем ырханланса, типшĕмленсе кайнă. Отпуска таврăннă салтаксем манпа тĕл пулса каласнă чухне: тем пулсан та, тепĕр хут Российăна каймалла ан пултăрччĕ», тетчĕç.

Китайăн нациллĕ-политикăллă совечĕн сессийĕ

ЧУНЦИН, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 26-мĕшĕнче Китайăн нациллĕ политикăллă совечĕн сессийĕнче 30 резолюцие яхăн йышăннă, вĕсенчен саккăрĕшĕ çулйĕрсемпе çыхăнусене лайăхлатас ыйтусем пирки.

Сесси икĕ комитет тума йышăннă: конституци çырса хатĕрлес тĕлĕшпе тата экономикăна урăхлатса çĕнетес тĕлĕшпе.

Сентябрĕн 27-мĕшĕнче сесси ялан ĕçлесе тăракан комитет суйланă. Комитета 25 çынна суйланă.

Китайăн наци правительстви нацилле политика совечĕн генеральнăй секретарĕ пулма Шао Ли—Цзына уйăрса лартнă.

КĔСКЕН

● Гитлерла оккупаци влаçĕсем Çурçĕр Италин пĕтĕм оккупациленĕ территорийĕнче администраци аппаратĕнче официальнăй чĕлхе вырăнĕнче нимĕç чĕлхи кăна шутланса тăни çинчен пĕлтерне.

● Сентябрĕн 27-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенче «Çĕнтерÿ флочĕн кунне» уявласа ирттереççĕ. Çак уява пула сăмах тухса каласа, Рузвельт Америкăри суднăсем тăвакансене, иртнĕ икĕ çул хушшинче 2.100 судно ытла туса кăларнăскерсене, мухтанă.

● Англири шахтерсен федерацийĕ Францири профсоюзсен вăрттăн ĕçлекен движенийĕн фондне 3.000 фунт стерлинг укçа хывнă. Çак укçа Францири нимĕçсене хирĕç кĕрешекен шахтерсене пулăшнă çĕре каять.

ХРОНИКА

СССР Совнаркомĕ А. Г. Мордвинов юлташа СССР Совнаркомĕ çумĕнчи архитектура ĕçĕсен комитечĕн председателĕ пулма уйăрса лартнă.

И. К. ИВАНОВ

ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ

„ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ" тухнăранпа пилĕк çул тултарчĕ

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» пичетленсе тухнăранпа ĕнер 5 çул тулчĕ. Çак кĕнеке пичетленсе тухни пирĕн Ленин—Сталин партийĕн идейăллă пурнăçĕнче питĕ пысăк событи пулса тăчĕ. ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1938 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче йышăннă постановленире çапла кăтартса пачĕ: «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» тухнăран вара парти большевизмăн идейăллă çĕнĕ хĕçпăшалне, марксизм-ленинизм облаçĕнчи тĕп пĕлÿсен энциклопедине илчĕ. Парти историйĕн курсĕ—большевизмăн наукăллă историйĕ. Унта коммунистсен партийĕн питĕ пысăк опытне пĕтĕмлетсе çырса панă».

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» пирĕн парти Ленинпа Сталин ертсе пынипе тунă аслă та пĕтĕм тĕнче историйĕнче юлнă çĕнтерÿсем çинчен каласа парать. Унта большевиксен партин питех те пысăк опытне пухса, пĕтĕçтерсе панă. Историллĕ фактсен никĕсĕ çине тайăнса, вăл кĕнекере марксизм-ленинизм теорийĕн никĕсĕсене пĕтĕçтерсе туллин çутатса панă. «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕнче» марксизм-ленинизм теорийĕ практикăллă ĕçсене татса панă çĕрте мĕн тери пысăк вырăн йышăннине кăтартса панă. Унта пирĕн партин социализмлă штултăра индустри тата колхозлă ялхуçалăхĕ тăвассишĕн мĕнле кĕрешнине кăтартса панă,—вĕсем халĕ, Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче, хăйсен çимĕçĕсене параççĕ. «Кĕске курсра» парти пирĕн çĕршыври культурăпа наукăна аталантарассишĕн кĕрешсе тунă çитĕнÿсене, ССР Союзĕнчи халăхсем политикăллă шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен Ленин-Сталин аслă партийĕ тавра нихăçанхинчен те таччăнрах пĕтĕçсе тăнине кăтартса панă.

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» пире идейăлăх, çирĕплĕх, организацилĕх енчен çÿлте тăма, сыхăлăхлă пулма тата çĕнтермелли искусствăна вĕрентет.

Пирĕн партин историллĕ опычĕ çакна кăтартса парать: большевиксем çĕнсе илме пултарайман крепоçсем çук. Анчах çĕнтерÿ хăй тĕллĕн пулмасть, ăна йывăрлăхсене çĕнтерни пе тăвас пулать. Çав йывăрлăхсене çĕнтерес тесен, общество аталанăвĕн законĕсене пĕлнипе хĕçпăшаллланмалла—«ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» тимлĕн вĕренмелле. Пирĕн халăх хăйĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнмалăхĕшĕн, ССР Союзĕнче социализм тăвассишĕн кĕрешни çинчен вĕренни, большевикла партипе Хĕрлĕ Çар 1918 çулта нимĕç юккупанчĕсене тата гражданин вăрçи вăхăтĕнче ют çĕршыв интервенчĕсене аркатса тăкни çинчен, 1918 çулта Царицина геройла хÿтĕлени, çĕршыв сыхăлăхĕшĕн, Германи фашизмĕн троцкистла-бухаринла агенчĕсене хирĕç кĕрешсе вĕсене çĕмĕрсе тăкни çинчен, сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче парти çĕршыва индустриализацилессишĕн тата ССР Союзĕн оборона вăй-хăватне тĕреклетессишĕн кĕрешни çинчен, ялхуçалăхне коллективизацилени тата вăл халĕ тăван çĕршывăн пурнăçĕнче паллă вырăн йышăнса тăни çинчен пĕлсе тăни пире халăхи кĕрешÿре—нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешнĕ çĕрте кучухнехи лару-тăрăва тĕрĕс ăнланса илме, пит те кăткăс обстановкăра тĕрĕс çул тупма лайăх майсем туса парать.

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренни тата ăна ĕççыннисен анлă массисем хушшинче сарни пирĕн тĕрĕслĕхшĕн пыракан кĕрешÿри шанчăка ÿстерет, фашизма çĕмĕрсе тăкас шанчăка çирĕплетет, тăван çĕршыва, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне юратма вĕрентет тата тăшмана çĕмĕрсе тăкассишĕн пирĕн çĕршыври миллионшар ĕççыннисене мĕнпур вăя хурса ĕçлеме çĕклет.

Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнеки — «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» малалла тăсни пулать. Сталин юлташ çав кĕнекере Германи фашизмне хирĕç пыракан вăрçăн характерĕпе тĕллевĕсене пире яр-уççăн кăтартса пачĕ, пĕтĕм совет халăхĕ умне тăшмана çĕнтермелли конкретнăй задачăсем лартрĕ, гитлерла Германие çĕмĕрсе тăкас ĕçри событисем мĕнле аталанса пынине уççăн кăтартса пачĕ.

Сталин юлташăн отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнчи выступленийĕсемпе приказĕсем—совет халăхĕн тата унăн çарĕн боевой программисем пулса тăраççĕ. Вĕсем кĕрешÿпе çĕнтерÿ çулне, прожектор пекех, çутатса тăраççĕ. Сталин юлташ вăрçă вăхăтĕнче тухса каланисем тата унăн приказĕсем—пулса иртекен событисен ăшчикне малтанах генилле витĕр курса тăнине кăтартса параççĕ, Сталин юлташăн сăмахĕсем пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕрсе пыраççĕ.

Акă мĕншĕн «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕпе» Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнеки кашни коммунистпа комсомолецăн, совет органĕнче ĕçлекен работникăн ялан алăри кĕнекисем пулма тивĕçлĕ.

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕпе» Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине вĕренес тĕлĕшпе пирĕн республикări коммунистсемпе комсомолецсем тата совет органĕсенчи ертсе пыракан работниксем мĕнле ĕçлеççĕ-ха?

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» пичетленсе тухни партин Чăваш республикинчи организацийĕшĕн те политикăллă питех те пысăк событи пулса тăчĕ. «Кĕске курсăн» вырăс чĕлхипе кăларнă çĕр пин ытла экземплярĕ, чăваш чĕлхипе кăларнă аллă пин ытла экземплярĕ республикăра хăварт саланчĕ. Коммунистсемпе комсомолецсен тата совет органĕсенчи ертсе пыракан работниксен пысăк пайĕ çак марксистла-ленинла кĕнекене питех те тимлĕн вĕренсе пычĕç.

1942 çулăн çурçулĕ тĕлнех пирĕн республикăра «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренес тĕлĕшпе 82 кружок ĕçленĕ, вĕсенче коммунистсемпе комсомолецсем икĕ пин çын ытла вĕреннĕ. Кружоксенче нумайĕшĕнче пирĕн партин Октябрьти социализмлă Аслă революци хыççăнхи тапхăрĕнчи историне вĕренсе тухнă тата ун тăрăх лекцисем те чылай итленĕ.

Анчах «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур. Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине вĕренес ĕç республикări пур районсемпе хуласенче те ăнăçлăн сарăлса пырать пулсан та, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренес тĕлĕшпе чылай районсенче ĕçсем япăх-ха.

Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн партипе совет органĕсен тата хуçалăх организацийĕсен кадрĕсем хăйсен теориллĕ пĕлĕвĕсене ÿстерес тĕлĕшпе сÿрĕк ĕçлеме пуçларĕç, парти организацийĕсем тата вĕсен секретарĕсем марксизмпа-ленинизма пропагандăлас ĕçрен пăрăнса, кадрсем хăйсен политикăллă пĕлĕвĕсене ÿстерес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине контрольлесе тăма пăрахрĕç, ку ĕç вăл хăй тĕллĕн пулса пырасса шанма пуçларĕç. Вĕсем пропаганда ĕçĕ партиллĕ ĕçĕн питех те кирлĕ енĕсенчен пĕри пулса тăнине, ку ĕç халăхăн мĕнпур вăйне ытханлă тăшмана çĕнтернĕ çĕре мобилизацилемелли хăватлă хĕçпăшал пулнине манна.

«ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмелли кружоксен ĕçĕсем те сÿнсе ларнă. Çавăн пекех пропаганда ĕçне лекцисем урлă тăвасси те, уйрăмах партин Октябрьти социализмлă Аслă революци хыççăнхи историйĕ çинчен ăнлантарса парасси, пачах çителĕксĕр пулса пырать. Партире çĕнĕрен илнĕ юлташсене политикăллă воспитани парас ĕçе тăтăшах, йĕркеллĕ туса пыни çук-ха, штатра тăман докладчиксене пурне те ĕçе явăçтарайман, туса ирттерекен лекцисемпе докладсен идейăллă содержанийĕ нумай чухне тивĕçлĕ вырăнта мар.

Çак çитменлĕхсем вĕсем йăлтах вăрçă вăхăтĕнчи условисенче партиллĕ пропагандăна тивĕçлипе хакламаннинчен килеççĕ. Уйрăмах Куславкка, Çĕрпÿ, Октябрьски, Ишлей тата ытти районсенче ку тĕлĕшпе ĕçсем япăх.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче хальхи лару-тăрăва тата пулса иртекен событисене тĕрĕс, Ленинпа Сталин вĕрентнĕ пек ăнланса илме пĕлни кирлĕ. Анчах хальхи питех те кăткăс обстановкăна марксистла-ленинла теорине тĕплĕн вĕренмесĕр, общество аталанăвĕн законĕсемпе тĕплĕн паллашмасăр тĕрĕс ăнланма çук. Акă мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн кадрсен кирек мĕнле обстановкăра та марксизм-ленинизм теорийĕ çинчен—кĕрешÿри тата практикăллă ĕçри хĕçпăшал çинчен манма юрамасть. Унсăрăн малалла хăюллăн та шанчăклăн кайма çук тата умра тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме массăсене те ăнăçлăн ертсе кайма çук.

Ленин—Сталин партийĕ халĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç совет халăхне кĕрешĕве ертсе пырать. Совет халăхĕ, хăйĕн пурнăçĕнчи опытне аса илсе, хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнин пĕтĕм историйĕн опытне аса илсе, большевиксен партийĕ ăна гитлерла юнлă империализма тĕппипех çĕнтересси патне илсе çитерессине ĕненсе тăрать.

Хальхи обстановка кадрсене марксизм-ленинизм наукин пĕлĕвĕсемпе хĕçпăшаллантарма хушать. Партин пирĕн республикări районсемпе хуласенчи организацийĕсен «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» тата Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» çырнă кĕнекине вĕренес ĕçе татах та анлăнрах туса пымалла. Ертсе пыракан кадрсемпе мĕнпур ĕççыннисем хушшинче марксизмпа-ленинизмăн вилĕмсĕр идейисене сарса, вĕсене фронта вăйлăнрах пулăшса тăма, тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкма мобилизацилес пулать!

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Н 250 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР, Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.